# Тыр-пул уявĕпе саламлатпăр!

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

81 (7612) № * Шăмат кун, 2008 çулхи октябрĕн (юпа) 25-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Вырма паттăрĕсем



*Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Радонеж Виссарионович Кузнецов кăçал та, 28-мĕш вырмана хутшăнса, хăйне ырă енчен кăна кăтартрĕ. Хăйне пулăшаканĕпе Юрий Гордеевич Орловпа (ЧР Президенчĕн кăçалхи стипендиачĕпе) «Акрос» комбайнпа 1622 тонна тырă çапса тĕшĕлесе районта пĕрремĕш вырăна тухрĕ.*

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

**ХИСЕПЛĔ ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ! ВЕТЕРАНСЕМ!**

Сире пурне те Тыр-пул уявĕпе чунчĕререн саламлатăп.

Кăçалхи уява эсир çитĕнӳсемпе кĕтсе илетĕр. Çанталăк условийĕсемпе туллин усă курма тăрăшрăр, акса-лартса хăварнă ял хуçалăх культурисене тухăçлă çитĕнтерсе илтĕр. Тыр-пула кашни гектартан 23,2 центнер, çĕр улмие 152 центнер пухса кĕртме пултартăр. Ку вăл иртнĕ çулхинчен палăрмаллах пысăк кăтарту. Тыр-пул çитĕнтерекенпе фермăра вăй хуракансен ĕçĕ уйрăлми тачă çыхăннине те асра тытса тăрăшрăр. Выльăх апатне çителĕклĕ таран хатĕрлесе хăвартăр. Çитес çул пирĕн умра татах та пысăкрах тĕллевсем пулаççĕ. Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Енре тырăпа çĕр улмие миллионшар тонна пуçтарса илме тĕллев лартнине ырлатпăр. Çак задачăна пурнăçлас тесе хамăртан килнине йăлтах тăвăпăр.

Выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессипе те пĕтĕмĕшле районĕпе кăçалхи 9 уйăхра иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен ăнăçуллăрах ĕçлерĕмĕр. Паян ферма ĕçченĕсем аш-какай, сĕт ытларах туса илессишĕн тимлеççĕ. Выльăхсен йышне ӳстерессипе те ĕçлеççĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе йĕркеллĕ хĕл каçарас тесе тăрăшаççĕ.

Сире пурне те çăмăл мар, анчах пархатарлă ĕçĕршĕн чĕререн тав тăватăп. Малашне те, йывăрлăхсенчен хăрамасăр, умри тĕллевсене чыслăн пурнăçласса шанатăп. Пурсăра та çирĕп сывлăх, ăнăçу, телейлĕ вăрăм кун-çул сунатăп. Çемйĕрсенче килĕшӳпе тату пурнăç пултăр. Çакă çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарса пытăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Кĕрхи ĕçсене пĕтĕмлетсе

# Тăрăшса ĕçлесен ӳсĕм пулатех

Ял хуçалăхĕ пирĕн район экономикин тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Агропромышленность комплексĕнче хастар та маттур, çĕр ĕçне чунтан парăннă тата юратакан çĕршер çын вăй хурать.

Хăйсен професси уявне ял хуçалăх ĕçченĕ кăçал япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илет. Паянхи наука çитĕнĕвĕсемпе усă куракан, ял хуçалăх техникине çĕнетсе агротехника ыйтăвĕсене пăхăнса ĕçлекен, çĕр пахалăхне çулсерен хăпартса пыракан, пысăк репродукциллĕ çĕнĕ сортсемпе усă куракан хуçалăхсем çанталăкăн кирек епле условийĕсенче те пысăк тухăç илме пултарнине куртăмăр.

Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене пĕтĕмпе 31 пин тонна яхăн пухса кĕртрĕмĕр, пĕлтĕрхинчен 10 пин тонна ытларах, кашни гектартан вăтамран бункер виçипе 23,1 центнер тухăç пулчĕ.

«Герой» хуçалăхра кашни гектартан 33,4 центнер, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 30,6 центнер, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 30,5 центнер, «Ударник» хуçалăхра 29,8 центнер, «Восток» хуçалăхра 29,1 центнер тĕш тырă пухса илме пултарчĕç.

Уйрăм çĕнĕ сортсем хăйсен тухăçĕпе ытларах та савăнтарчĕç. Ильич яч. хис. хуçалăхра (хуçалăх ертӳçи Игорь Васильевич Николаев, тĕп агрономĕ Федор Аверкиевич Егоров) урпан «Владимирский» сортне кашни гектартан 73 центнер илме пултарчĕç. Çавăн пекех «Восток» хуçалăхра (хуçалăх ертӳçи Михаил Николаевич Шишокин) «московская-39» сортлă кĕрхи тулă гектартан 61 центнер, «эльф» сортлă урпа гектартан 55 центнер тухăç пачĕç. «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕнче (хуçалăх ертӳçи Платон Павлович Давыдов) «прохоровка» çурхи тулăна гектартан 48 центнер пухса кĕртрĕç.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, тыр-пул пухса кĕртес ĕç комбайнерсем çине тиенет. Хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлассипе кăçалхи вырмара уйрăмах лайăх ĕçленĕ комбайнерсене палăртса хăварма кăмăллă. Акă вĕсем: Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Радонеж Виссарионович Кузнецов «АКРОС» комбайнпа 1622 тонна, «Свобода» хуçалăхри Валерий Алексеевич Соловьев «ДОН–1500» комбайнпа 1505 тонна, Чкалов яч. хис. хуçалăхри Болеслав Николаевич Никитин «Вектор» комбайнпа 1345 тонна, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Юрий Петрович Егоров «Енисей 1200» комбайнпа 864 тонна тырă пуçтарса илчĕç.

Тырă турттаракансене те ырă ятпа асăнса хăварас килет. «Ударник» хуçалăхри Александр Ермогенович Анисимов, «Оринино» хуçалăхри Иван Алексеевич Ершов, «Герой» хуçалăхри Арефий Александрович Мясников тăрăшса ĕçлерĕç.

Çĕртме сухи ĕçĕсенче палăрнă чи маттур трактористсене тав тăватăп. Вĕсем: «Свобода» хуçалăхри Николай Петрович Максимов, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Федор Петрович Журавлев, «Востокри» Дмитрий Андреевич Быков тата ыттисем те.

Механизациленĕ бригадăсене ертсе пыракансенчен Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Валерий Федорович Добрянские, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Георгий Максимович Сергеева, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Николай Валерьевич Белова тата уй хир бригадисене ертсе пыракансенчен Е.Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Римма Семеновна Андреевана, «Герой» хуçалăхри Мария Ивановна Михайловăна, «Ударник» хуçалăхри Раиса Георгиевна Васильевана ял хуçалăх техникине юсавлă тытса, ĕç çыннисене пĕрлештерсе пырса мĕн пур ĕçсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пынăшăн ырă ятпа кăна асăнмалла.

Муркаш районĕ республика шайĕнче çĕр улми туса илессипе яланах палăрса тăнă. Кăçал «иккĕмĕш çăкăра» 1063 гектар çинчен 17,8 пин тонна пуçтарса илтĕмĕр. Районĕпе вăтам тухăç 168,1 центнерпа танлашрĕ. Çак культурăна кашни гектартан «Оринино» хуçалăх 236,7 центнер, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх 229,4 центнер, «Герой» хуçалăх 228 центнер, «ДаАн» 210 центнер, «Свобода» хуçалăх 166,8 центнер, «Ударник» хуçалăх 165 центнер туса илчĕç. Уйрăм уйсенче «удача», «снегирь», «рокко», «наяда» сортсен тухăçĕ 300-350 центнертан та иртрĕ.

«Иккĕмĕш çăкăра» вăхăтра тата тирпейлĕ пухса кĕртес ĕçре хуçалăхсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен коллективĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Уйрăмах Чуманкасси шкулĕ (355 тонна пуçтарнă), Сосновка (268 тонна), Çатракасси (252 тонна), Йӳçкасси (246 тонна), Муркаш (243 тонна) шкулĕсем тăрăшуллă пулчĕç.

Хĕрӳ тапхăрта тивĕçлĕ пулăшу панăшăн Муркашри сĕт завочĕн, «Моргаушкорм» обществăн коллективĕсене, Муркаш тата Мăн Сентĕр райповĕсен ĕçченĕсене тав сăмахĕ калас килет.

Пулас тыр-пул никĕсне кăçалах хывса хăварассишĕн районти чылай хуçалăх çине тăрса тимлерĕ, кĕрхи культурăсене агротехникăпа палăртнă вăхăтра пĕтĕмпе 4163 гектар акса хăварнă. Ку енĕпе уйрăмах Суворов ячĕпе хисепленекен (794 га), «Ударник» (420 га), «Оринино» (313 га), «Свобода» (230 га), Ильич ячĕпе хисепленекен (210 га) тата ытти хуçалăхсем йĕркеллĕ ĕçлерĕç.

Нумай çул хушши усă курман çĕрсене сухаласа çаврăнăша кĕртес тĕлĕшпе Юнкă, Шетмĕпуç, Мăн Сĕнтĕр, Катькас, Ильинка, Çатракасси ял тăрăхĕсенче, Суворов ячĕпе хисепленекен, «ВТМ», Мичурин ячĕпе хисепленекен, «Колос», Бархаткин, Павлов, Матвеев, Толстов хресчен хуçалăхĕсем аван ĕçлерĕç. 1640 гектар суха ĕçĕсем турĕç, 943 гектар çинче кĕрхи культурăсем акса хăварчĕç.

Ял ĕçченĕсем хальхи вăхăтра кĕрхи çĕртме тăваççĕ, хуçалăхсенче усă курнă техникăна хĕллехи управа лартаççĕ, çĕмĕрĕлни-ваннисене юсаса усă курма хатĕрлеççĕ.

Хуçалăхсенче машинăпа трактор паркне çĕнетмесен, çĕнĕ технологисене хута ямасан малашлăх çуккине хуçалăх ертӳçисем лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа кăçал районта 47 çĕнĕ техника 40 миллион та 590 пин тенкĕлĕх туяннă: кредитпа 26 миллион та 820 пин тенкĕлĕх, лизингпа 7 миллион та 581 пин тенкĕлĕх, хуçалăхсен укçипе 6 миллион та 189 пин тенкĕлĕх. Ку енĕпе «Ударник», «Оринино», «Герой», Суворов ячĕпе, Чкалов ячĕпе, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсене ырăпа палăртмалла.

Юлашки çулсенче продукци туса илес ĕçре ял хуçалăх предприятийĕсемпе пĕрлех хушма хуçалăхсен тӳпи те пысăкланса пырать. Муркаш районĕпе пĕтĕмпе туса илнĕ çĕр улмин 70 проценчĕ, пахча çимĕçĕн 95 проценчĕ, ашкакайăн 65 проценчĕ, сĕтĕн 78 проценчĕ уйрăм хушма хуçалăхсем çине тивет. Хушма хуçалăхсене аталантармашкăн çăмăллатнă кредитсем кăçал районĕпе 412 çын 68 млн. тенкĕлĕх илнĕ. Ку енĕпе Ярапайкасси, Çатракасси тата Чуманкасси ял тăрăхĕсенчи ĕç çыннисем патшалăх пулăшăвĕпе ытларах усă курнă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Йышăну

## Район администрацийĕн Хисеп грамотипе тата Тав çырăвĕпе наградăласси çинчен

***1.Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе районти ял хуçалăх отрасльне аталантарассинче пысăк тӳпе хывнăшăн тата нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн 300 тенкĕлĕх парне парса район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлас:***

**Иван Ермогенович АНИСИМОВА**, «Ударник» хуçалăх водительне;

**Дмитрий Андреевич БЫКОВА**, «Восток» хуçалăх механизаторне;

**Илья Николаевич ВАСИЛЬЕВА**, «Свобода» хуçалăх механизаторне;

**Николай Петрович ИВАНОВА**, Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх механизаторне;

**Геннадий Алексеевич ИЛЛАРИОНОВА**, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх механизаторне;

**Григорий Моисеевич МОИСЕЕВА**, «Оринино» хуçалăх водительне;

**Евстафий Алексеевич ФИЛИППОВА**, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх водительне;

***2.Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе наградăланисене 500 тенкĕлĕх парнесемпе палăртас:***

**Римма Семеновна АНДРЕЕВАНА**, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн уй-хир бригадин бригадирне;

**Евгений Георгиевич ИВАНОВА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин водительне;

***3. Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе наградăланисене 400 тенкĕлĕх парнесемпе палăртас:***

**Александр Петрович АЛЕКСАНДРОВА**, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх тракторист-машинистне;

**Владимир Аркадьевич КАЛИНИНА**, Муркашри сĕт завочĕн ертӳçине;

**Мария Ивановна МИХАЙЛОВАНА**, «Герой» хуçалăх уйрăмĕн ертӳçине;

**Георгий Максимович СЕРГЕЕВА**, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн тĕп инженерне;

**Федор Иванович СПАСКИНА**, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх водительне;

***4. Тĕш-тырă тата çĕр улми районăн вăтам кăтартăвĕнчен тухăçлăрах туса илнĕ ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисене район администрацийĕн Тав çырăвĕпе палăртас:***

**Михаил Николаевич ШИШОКИНА**, «Восток» хуçалăх ертӳçине;

**Ростислав Николаевич ТИМОФЕЕВА**, «Герой» хуçалăх ертӳçине;

**Владимир Славич АНДРЕЕВА**, Суворов яч. хис. хуçалăх ертӳçине;

**Павел Геннадьевич ЕФИМОВА**, Чкалов яч. хис. хуçалăх ертӳçине;

**Кронид Ефимович СРЕТИНСКИЕ**, «Свобода» хуçалăх ертӳçине;

**Игорь Васильевич НИКОЛАЕВА**, Ильич яч. хис. хуçалăх ертӳçине;

**Платон Павлович ДАВЫДОВА**, «Ударник» хуçалăх ертӳçине;

**Юрий Николаевич ШИШОКИНА**, «Оринино» хуçалăх ертӳçине;

**Инна Ивановна ГЕРМАНОВАНА**, «ДаАн» ертӳçине;

**Владислав Валерьевич Бархаткина**, «Бархаткин» хуçалăх ертӳçине;

**Александр Иванович ТОЛСТОВА**, «Толстов» хуçалăх ертӳçине;

**Владимир Аркадьевич КАЛИНИНА**, Муркашри сĕт завочĕн ертӳçине;

**Николай Григорьевич ВАНЕРКИНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ертӳçине.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Хĕллехи вăхăт çине куçатпăр

***Çитес вырсарни кун, октябрĕн 26-мĕшĕнче, çĕрле виçĕ сехетре сехет йĕпписене пĕр сехет каялла куçармалла. Çĕр-шыв хĕллехи вăхăт çине куçать.***

**Çырăнтару – 2009**

## Çитес çур çул валли çырăнтараççĕ

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.***

***Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!***

**Райхаçат редакцийĕ.**